Петров В. Иванов çулталăкĕ тухăçлă иртрĕ : [поэта халалласа иртнĕ фестиваль, Пушкăртстан] / В. Петров // Хыпар. – 2000. – 20 раштав. – (Чăваш тĕнчи, № 9).

# ИВАНОВ ÇУЛТАЛĂКĔ ТУХĂÇЛĂ ИРТРĔ

## Ухсайăнне те çаплах ирттересчĕ

**_К.В.ИВАНОВПА Я.Г.Ухсай сăвăççене çуратса ÿстернĕ Слакпуç ялĕнче шавлă та хаваслă фестиваль иртрĕ. Аслă поэтăмăр çуралнăранпа 110 çул çитнине уявлассине пĕтĕмлетни теме пулать асăннă уяв пирки. Унта, тĕпрен илсен, республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан 300 яхăн ентеш хутшăнчĕ. Слакпуçĕнче иртнĕ фестиваль Пушкăртстанри чăвашсен ăс-хакăл анинче хăй каçалăкне йышăнчĕ тесе çирĕплетсе калама пулать._**



Пушкăртстанри чăвашсен Канашĕн ĕçтăвкомĕн ларăвĕ, К.В. Иванов поэтăмăрăн музей-çурчĕн 60 çулхи юбилейне уявлани, асăннă фестиваль – пурте пĕрле пуçтарчĕç йышлă халăха Слакпуç ялне.

Пушкăртстанри чăваш пултарулăх ушкăнĕсен фестивальне Пелепей хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Г.Газизов уçрĕ. Вăл фестиваль хăнисене хавхаланупа ăнăçу сунчĕ, К.В.Иванов аслă поэт ячĕпе ырă ĕçсем пурнăçа кĕнине палăртрĕ. Сăмах май, Пелепей хула администрацийĕ тăрăшнипе К.В.Ивановăн 110 çулхи юбилейĕ кирлĕ шайра иртнине те асăнса хăвармаллах. Ун хыççăн Слакпуç тăврашĕнчи Канаш поселокĕнче çуралса ÿснĕ П.К.Васильев сăмах илчĕ. Петр Клавдиевич – ПР Патшалăх Пухăвĕн депутачĕ. Вăл хăйĕн тăван ялне май пулсанах килме тăрăшнине палăртрĕ. Хăна К.В.Иванов çурт-музейне Пушкăртстан Республикин суверенитечĕ 10 çул тултарнине халалланă кĕнеке парнелерĕ. Ĕпхÿри паллă предприниматель Г.М.Ильин, сăмахран, салам телеграммипе пĕрлех музее 500 тенкĕ уйăрса панине çирĕплетекен хут çитернĕ. Пушкăртстанри чăвашсен Канашĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ Георгий Петрович Шушпанов Пелепей хула тата район администрацийĕн пуçлăхне Р.Г.Газизова тата музей директорне Е.А.Даниловăна Хисеп хучĕсем парса чысларĕ. Саламлă телеграмма ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствинчен те килнĕ.

Пуху хыççăн Слакпуçĕнчи культура çурчĕн сцени çинче фестиваль йыхравне йышăнса килнĕ пултарулăх ушкăнĕсем хуçаланчĕç. Камсем-ха? Ĕпхÿри «Нарспи» халăх ансамблĕ /ертÿçи Г.Ю.Кириллова/, Федоровка тăрăхĕнчи «Ашкадар çăл куçĕсем» /ертÿçи З.Н.Семенова-Сурпан/, Пишпÿлекри «Шурă хурăн» /ертÿçи В.А.Иванова/ халăх ансамблĕсем, Иглин, Кармаскалă, Чекмагуш, Мияки, Ермекей, Пелепей тăрăхĕсенчи чăваш пултарулăх ушкăнĕсем хутшăнчĕç тăван юрра-кĕвве сумлакан уява.

Çакна палăртмалла: Кармаскалă тăрăхĕнчи «Шевле» /ертÿçи С.С.Матвеева/, Чекмагуш тăрăхĕнчи Юмашри пултарулăх ушкăнĕ, Пелепей тăрăхĕнчи «Илем» /ертÿçи В.Е.Гордеев/, «Чарлан» /ертÿçи Ю.Л.Денисов/, «Телей», «Янрав» /ертÿçи Е.Н.Григорьева/ ансамбльсем куракана чăннипех савăнăç парнелерĕç пулсан, Ĕпхÿри «Нарспи» халăх ансамблĕн артисчĕсем вара тĕлĕнтерчĕç те, хăйсен пултарулăхĕпе тыткăнларĕç те. Слакпуçĕнче Мияки тăрăхĕнчи Саккул, Ермекей районĕнчи Елань-Чишма, Чекмагушри Çĕнĕ Сименкке, Иглин тăрăхĕнчи Исак-Казанка ялĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсем те хăйсен аталанăвĕнче пысăк çитĕнÿсем тунине палăртма кăмăллă.

Юлашкинчен фестивале хутшăннă кашни ушкăнах тĕрлĕ парне парса чысларĕç, пултаруллăраххисем вара дипломсене тивĕçрĕç. Халăха çавнашкал пархатарлă уяв парнеленĕшĕн, ăна йĕркелесе ирттерме пулăшнă мĕн пур культура ĕçченне пуç тайса чун-чĕререн тав сăмахĕ калас килет. Тивĕçлĕ вĕсем ăна чăннипех те. Çакна асăннă уявра пулса курнă кашни çынах çирĕплетме пултарать пулĕ тетĕп. Çавна май Кĕçтенттин Васильевич Иванов çулталăкне тивĕçлипех вĕçлерĕмĕр тесе пĕтĕм кăмăлтан калама пултаратпăр ахăртнех. Ухсай Яккăвĕн çулталăкне те çаплах туллин те ăнăçлă ирттересчĕ эппин.

**В.ПЕТРОВ.**

Пелепей хули.
● **«НАРСПИ» ФОЛЬКЛОР УШКĂНĔН ХАСТАРĔСЕМ.**
**Н.АКМЕЕВ** сăн ÿкерчĕкĕ.